## Ашшĕ-амăшĕсене пĕлме

# Пособисем ӳсрĕç

***Январь уйăхĕнчен тытăнса ача пур çемьесем илсе тăракан хăш-пĕр пособисен виçисем ӳсессе маларах калаНăччĕ. Тĕплĕнрех вĕсем пирки ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. ПЕТРОВА пĕлтерчĕ:***

– 2008 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче йышăннă «2009 çулхи тата 2010-мĕшпе 2011-мĕш çулсенчи планланă тапхăрăн Федераллă бюджечĕ çинчен» 204 № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ача пур çемьесене паракан хăш-пĕр пособисене ӳстерме палăртнăччĕ.

Çапла вара паянхи кун тĕлне çие юлнă хĕрарăмсем учета тӳрех тăраççĕ пулсан вĕсене 359 тенкĕ 70 пус пособи параççĕ. Ача çуратнăшăн пĕр хутчен паракан пособи январĕн 1-мĕшĕнчен 9592 тенкĕ 03 пуспа танлашать. Ачана пĕр çул çурăччен пăхнăшăн паракан пособисен виçисем кăшт хăпарни те савăнтарать. Пĕрремĕш ачана пăхнăшăн паракан чи пĕчĕк пособи – 1798 тенкĕ 51 пус, иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачасене пăхнăшăн паракан чи пĕчĕк пособи виçи 3597 тенкĕ 01 пус. Çак пособин чи пысăк виçи вара 7194 тенкĕ 03 пус.

Уйăхсерен ачана ӳстерме паракан пособи виçи хальлĕхе улшăнман-ха.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Редакци почтинчен

# Каникул кунĕсенче

Хĕллехи каникул кунĕсене Сосновкăри шкул ачисем усăллă ирттерме тăрăшрĕç. Спортзала çӳрекенсем те пулчĕç, шкул çумĕнче йĕркеленĕ лагере те хаваспах çӳрерĕç ачасем, ялти библиотекăри тĕл пулусене те хутшăнчĕç.

Кăрлач уйăхĕн 6-мĕшĕнче Сосновкăри библиотекăра «Тивлетлĕ Тăван çĕр-шывăм» ятпа литература каçĕ иртрĕ. Эпир унта Муркаш районĕ 65 çул тултарнине халалласа йĕркеленĕ кĕнеке выставкипе паллашрăмăр. Пирĕн районăн паллă çыннисем пирки тепĕр хут аса илтĕмĕр. Унтах хамăр Васкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ каччăн Олег Прокопьевăн (халĕ пурте ăна Чăваш телевиденийĕн журналисчĕ пулнипе пĕлеççĕ) нумаях пулмасть тухнă кĕнекине те куртăмăр. Тĕл пулăвăн тепĕр пайĕ вара шăпах çав «Шыв çинчи сар хĕвел çутипе» ятлă кĕнекепе паллашни пулчĕ. Пире библиотека ертӳçи Татьяна Зиновьевна кĕнекери чылай сăвва вуласа пачĕ, вĕсен тарăн шухăшне те ăнлантарчĕ. Вăл пире январĕн 30-мĕшĕнче Васкассинчи Культура çуртĕнче çак кĕнекен презентацийĕ иртессине пĕлтерчĕ. Паллах, çав кун пире кĕнеке авторĕ Олег Иванович Прокопьев хăйĕн çĕнĕ сăввисемпе паллаштарĕ. Эпир ăна чăтăмсăррăн кĕтетпĕр.

**Виктор СТЕПАНОВ,**
**9 класра вĕренекен.**

## Юбилей

# Ăста

***Петр Яковлевич Мазуркин паллă ăста, вăл йывăçран касса тем тĕрлĕ япала хатĕрлет. Халăх промыслисем паян энтузиастсем çинче тытăнса тăраççĕ.***

***Çак кунсенче Петр Яковлевич 60 çул тултарчĕ. Пирĕн штатра тăман корреспондент В. Кожевников юбилярпа тĕл пулнă.***

**— Петр Яковлевич, сирĕн ĕç хобби, чуна кантарни, укçа ĕçлесе илмелли май-и?**

— Чи малтан вăл маншăн — пултарулăх. Хобби тенине те шута кĕртмелле. Эпĕ хатĕрленĕ пур япала уникаллă, вăл шутлă тавар. Ăна штамплаcа тума май çук. Материала алла илсен вăл хăех хăйĕн ĕлкипе тĕксе, тĕртсе унран мĕн пулмаллине кăтартать. Хăш чухне килти савăт-сапа, хăш чухне мĕнле те пулсан кăсăклă ĕлкеллĕ скульптура пулать вара.

**— Нумаях пулмасть Экономика аталанăвĕн министерстви халăх промыслисене тевĕш парас программăна йышăннă. Сире патшалăх мĕнле те пулсан пулăшу парать-и?**

— Конкурс-куравсене хаваспах хутшăнатăп. Вĕсем мана ĕçлеме хавхалантарсах тăраççĕ. Пулăшма ыйтман. Ман патра туристсем килсе çӳремелли выран тăвас тесе сĕннĕччĕ. Эп хирĕç мар. Анчах та маншăн бизнес-план хатĕрлесе парасси – кăткăс ыйту. Çапах та пулăшу пулсан вăл пурнăçа кĕретех.

**— Тĕплĕнрех культура туризмĕ çинчен каласа парăр-ха. Сирĕн пата хăнасем килнĕ-и, мĕнле условисем пулнă тата çакă малалла аталанĕ-и?**

— Республика кунĕнче ман патран 20 яхăн велосипедист хăна пулса кайрĕ.

Манпа тата ман ĕçсемпе питĕ кăсăкланчĕç. Çĕр касса мунча кĕрсе тухрĕç, ир-ирех Республика кунне уявлама Муркаша тухса кайрĕç. Ют çĕр-шыв çыннисем те хăналанса. Францинчен, Турцинчен темиçе хут килсе кайса. Пĕррехинче трейлерпа пĕр çемье кĕрсе тухрĕ, вĕсем канчĕç, нумай ӳкерчĕç. Мана вĕсем манăн кивелсе кайнă, çуркаланма пуçланă ĕçсене туянни тĕлĕнтерчĕ. Тин кăна тунă япаласене вĕсем илмерĕç. Пирĕн республикăра инвалидсене пулăшакан Стефан та темиçе хут пулнă, заказсем парса хăварнă. Эпĕ малтан музыка сăпрайĕсене те тунă. Стефан шакăрма, шакмак, шăхличсем туянчĕ. 40 ытла француз килсе кайни те мĕне тăрать. Вĕсем валли ансамбль илсе килсе, хам та кĕсле каларăм. Юлашкинчен какай шӳрпипе хăналарăмăр, мунча кĕртрĕмĕр.

Мана Культурăпа Экономика министерствисем кил-усадьба тума сĕнеççĕ. Ку ыйтăва татса паман-ха.

**— Эсир нумай япала касса ăсталатăр. Мĕнле майпа сутатăр? Реализаци мĕнле каналсемпе пырать?**

— Ун пек каналсем ман çук. Ăнсăртран хăнасем килсе кайсан, уявсенче суткалатăп. Ытларах чухне тӳлевсĕр ĕçлеме тивет. Çынсем те парнесем валли хăйне евĕр япаласем шыраса ман пата килеççĕ. Эпĕ вара вĕсене яланах хавас.



## Спорт

# Хĕллехи сезона уçнă май

Кăçалхи январĕн 23–24-мĕшĕсенче хĕллехи спорт сезонне уçнă май ĕç çыннисемпе шкул ачисем хушшинче районта мала тухассишĕн хĕллехи полиатлон енĕпе ăмăртусем иртеççĕ. Ăмăртусем Муркашра пулмалла. Хĕллехи спорт сезонне савăнăçлă лару-тăрура январĕн 24-мĕшĕнче 10 сехетре уçаççĕ.

Программа çакăн пек. Январĕн 23-мĕшĕнче Муркаш шкулĕн тирĕнче пневматикăлла винтовкăран пересcипе, турник çинче туртăнассипе (яшсемпе арçынсем), алă вăйĕпе тĕртĕнессипе (хĕрсемпе хĕрарăмсем) ăмăртаççĕ. Ăмăртусем 12 сехетре пуçланаççĕ.

Январĕн 24-мĕшĕнче Муркашри йĕлтĕр базинче йĕлтĕрпе ăмăртса чупаççĕ (3 тата 2 километр). Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

Ăмăртусене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен, ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен, учрежденисен тата ял тăрăхĕсен пĕрлештернĕ командисем хутшăнаççĕ, вĕсен ертӳçисен те пĕрле пулмалла.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсен командинче 2 яшпа 2 хĕр тата 1 представитель, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсен командинче 4 яшпа 4 хĕр (1993–1994 ç.ç.; 1991–1992 ç.ç.) тата 1 представитель, физкультура коллективĕсен 2 арçынпа 2 хĕрарăм тата 1 представитель пулмалла.

Мала тухнă командăсене район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн дипломĕсемпе хаклă парнисем кĕтеççĕ, мала тухнă уйрăм участниксене дипломсемпе хаклă парнесем параççĕ.

**Хамăр инф.**

## Милици хроникинчен

# Çĕнĕ çул «парни»

Çĕнĕ çул иртнĕ хыççăн темиçе кунтанах Муркашра пурăнакан пĕр кин сулахай урипе тăнă пулас вырăн çинчен. Ирхи тăхăр сехет тĕлĕнчех хăйĕн хуньамăшне «чышкă кукли» çитерне. Хĕрĕх урлă каçнă кин, ыйхăран вăранайманскер, кукăле мĕнрен пĕçермеллине те чухласа илеймен. 1935 çулта çуралнă ватă хĕрарăм, паллах, вăйсăр пулнă.

Анчах та Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн вăйĕ пурин валли те çителĕклĕ. Çак «хастар» кине вăй виçме халĕ 116-мĕш статья кĕтет.

# «Атя, ывăлăм, ан хăра»

Çапла каласа Тушкассинчи арçын хăйĕн ывăлне «ĕçе» илсе тухнă. Каçхи сакăр сехет тĕлĕнче, уйрăмах кану кунĕсенче, пурте телевизор умĕнче ларнипе усă курас тенĕ ĕнтĕ çак арçын. Пĕр кил урлă пурăнаканăн пӳрт патне çитиччен никамах та курмĕ тенĕ пуль. Ывăлĕпе пĕрле вăл çитмĕл çулхи карчăкăн килне çăрана çĕмĕрсе кĕнĕ. Кĕсье телефонне, 360 тенкĕ укçа, кошелекне те пĕрлех вăрласа тухнă.

Ашшĕ хăйĕн ывăлне тĕрĕс пурăнма вĕрентрĕм тесе шутлать-ши? 21 çулхи каччăн пурнăçне хăех пĕр самантпах чĕрсе хунине ăнланчĕ-ши вăл? Халĕ ку тĕлĕшпе Уголовнăй Кодексăн 158 статйипе уголовнăй ĕç пырать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:180301:63, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Синьял-Акрамово, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:180301, площадью 6000 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:020201:138, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, с. Ильинка, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:020201, площадью 6097 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения прудового хозяйства, без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:281001:522, местоположение: установлено относительно ориентира плотина, расположенного в границах участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, площадью 392690 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на них:

- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:575, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:170901, площадью 6000 кв. м.;
- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:576, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:170901, площадью 5000 кв. м.;
- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:574, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:170901, площадью 5600 кв. м.;
- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:577, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:170901, площадью 6300 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на них:

- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070505:132, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:170505, площадью 6175 кв. м.;
- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070505:135, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170505, площадью 5758 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Спутниковое телевидение от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95. Спутниковый интернет.** 17-20.

**Организация оказывает услуги по независимой оценке для физических и юридических лиц: оценка земельных участков; оценка зданий, квартир; оценка автотранспорта, оборудования; оценка предприятий (бизнеса), акций; оценка ущерба от затопления. Справки по тел.: 37-30-80, 8-927-667-30-80.** 2-2.

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41.** 8-13.

**Продаю кирпич: красный одинарный М-100, М-125, М-150, красный полуторный пустотный М-125, силикатный, КББ 20х20х40, керамзит, гравмассу, кирпич половняк. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97.** 3-8.

**ЗАО «МСО «Моргаушская» поздравляет вас с Новым годом и сообщает об открытии дополнительного офиса ЗАО «МСО «Моргаушская» в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября, д. 5. Продаем готовое жилье, 1-2-х комнатные квартиры. Обращаться по тел.: 2-21-19, 44-01-99 (сотовый).** 2-2.

**Продаю месячных бычков шведской породы. Цена договорная. Тел.: 8-927-863-28-05.**

Мăн Сĕнтĕр больница коллективĕ терапи уйрăмĕнчи З.А. Столярова санитаркăн юратнă мăшăрĕ

**Димитрий Арсентьевич**
**СТОЛЯРОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Турай ял тăрăхĕн администрацийĕн коллективĕ нумай çул хушши кунта тĕп бухгалтер пулса ĕçленĕ вăрçăпа ĕç ветеранĕ

**Николай Степанович**
**СТЕПАНОВ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 20.01.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3823.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.